«Халăх тăрăшнипе, патшалăх пулăшнипе»

# Такăр çул пуласса, пĕве тасатасса шанаççĕ


Москакасси ача сачĕ патне такăр çул пулĕ.

Кăçалхи октябрĕн 24 – 26-мĕшĕсенче Москакасси территори пайĕн пуçлăхĕ Денис Кириллов Москакасси тата Эхветкасси ялĕсенче пурăнакан çынсемпе тĕл пулусем ирттерчĕ. Пĕрлехи пухусенче пуçлăх вырăнти çынсемпе йăлари çивĕч ыйтусене хускатрĕ. Кашни ялăн хăйĕн ыйтăвĕ. Çак вăхăт тĕлне çынсене Москакасси ялĕнчи Зеленая тата Молодежная урамсенчи çула юсасси ытларах пăшăрхантарать. Эхветкассисем вара сыхлăх тĕлĕшпе ĕçлесшĕн, ялта пушар хăрушсăрлăхĕ валли пĕве тасатасшăн. Çынсен сĕнĕвĕсем питĕ вырăнлă.

Москакассисем пухура активлă пулса пуçарулăх бюджечĕн çакăн пек проекчĕсене хутшăнма шухăшларĕç.

Пĕрремĕшĕ – Москакасси шкул автобусне çÿретме çул юсасси тата Москакасси ялĕнче шкул ачисем валли тротуара йĕркене кĕртесси. Ĕçĕ калăпăшлă, проект хакĕ – 5 миллион тенкĕ çурă.

Иккĕмĕшĕ – Москакассинчи ача сачĕ патне ачасемпе ашшĕ-амăшне пырса çÿреме хăрушлăхсăр çул-йĕрпе тивĕçтересси. Çак проектăн хакĕ те пĕрремĕшĕнчи пекех, 5 миллион тенкĕ çурă.

Эхветкассисен пуçарулăх бюджечĕн проекчĕ 4 миллион та 940 пин те 856 тенкĕлĕх. Вĕсен проекчĕ пушар хăрушсăрлăх тĕлĕшпе пулмалла.

Асăннă программăна хутшăнас пулсан республикăра малашне çĕнĕлĕхсем вăй кĕртме палăртнă. Проектсемшĕн патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерекен пĕрлехи порталта сасăламалла пулать, çакăн пирки вырăнти çынсене ăнлантарнă.

Москакасси территори пайĕнче пурăнакансем çÿлерех асăннă проектсемшĕн конкурс сасăлавне активлă хутшăнасса шанас килет.

# Оринин тăрăхĕнче ялсем çĕнелеççĕ

Оринин территори пайĕнчи Атапай, Пăсăрман, Патаккасси, Чамăш, Лапкас, Çĕньял Оринин тата Мулкачкасси ялĕсенче пурăнакансем çитес çул пуçарулăх бюджечĕн программине хутшăнма проектсем суйларĕç. Çапла пĕлтерет Оринин территори пайĕн пуçлăхĕ Валентина Пушкова.

2025 çулта Оринин тăрăхĕнчи пуçарулăх бюджечĕн икĕ проекчĕ ялсене шывпа тивĕçтерессипе çыхăннă: пĕрремĕш проект – Пăсăрман ялĕнче шыв çыхăнăвне юсасси, проект хакĕ – 2 млн тенкĕ çурă ытларах, иккĕмĕш проект – Чамăш ялĕнчи Иккĕмĕш урамри шыв çыхăнăвне юсасси. Çак ĕçĕн хакĕ те 2 млн тенкĕ çурă ытларах.

Çынсем шывпа тивĕçтерес системăна юсасси пирки тахçанах шухăшлаççĕ, мĕншĕн тесен Пăсăрман ялĕнче тата Чамăш ялĕнчи Иккĕмĕш урамри шыв сечĕсем çак вăхăт тĕлне питех те япăхса çитнĕ. Çавна май вĕсене тăтăшах юсама тивет. Депутатсен Муркаш округ Пухăвĕн депутачĕ П. Вязов ертсе пынипе вырăнти активлă çынсем тата Ю. Кожевниковпа А. Артемьев старостăсем ял çыннисене пуçарулăх бюджечĕн программине хутшăнма сĕннĕ. Кăçалхи мартăн 9-мĕшĕнче Чамăш ялĕнче шыв çыхăнăвĕн сетьне юсасси пирки калаçнă, сасăласа ку тĕлĕшпе пуçарулăх ушкăнне йĕркеленĕ. Пăсăрманта вара çÿлерех асăннă ĕç валли мартăн 17-мĕшĕнче пуçарулăх ушкăнĕ тунă.

Çавăн пекех Оринин территори пайĕнче пуçарулăх бюджечĕпе татах тепĕр 4 проект пурнăçласшăн. Вĕсем ялсенчи пĕвесене тасатассипе çыхăннă: пĕрремĕшĕ – Лапкасра, смета хакĕ 987 пин тенкĕ ытларах, иккĕмĕшĕ – Патаккассинче, кунта пурнăçламалли ĕç калăпăшĕ пĕчĕкрех, çак ялта 810 пин тенкĕ ытлалăх ĕç туса ирттермелле. Çĕньял Оринин ялĕнче те çынсем пĕве тасатасшăн. Проект хакĕ самай пысăк, 1 миллион та 350 пин тенкĕ ытлалăх. Мулкачкассинчи пĕвесене тасатма вара – 3 миллион та 416 пин те 72 тенкĕ каймалла.

Çак ялсенче пурăнакансем те ку тĕлĕшпе пухусем ирттернĕ, проектсене ырланă, пуçарулăх ушкăнĕсем йĕркеленĕ. Çĕньял Орининта пуху майăн 26-мĕшĕнче пулнă. Патаккассинче çак ĕç пирки апрелĕн 12-мĕшĕнче калаçнă, мулкачкассисем апрелĕн 26-мĕшĕнче тĕл пулчĕç, лапкассем – июлĕн 6-мĕшĕнче.

Атапай ялĕнче пурăнакансем апрелĕн 26-мĕшĕнчи пухура хăйсен ялĕнче ача-пăча площадки тăвас шухăша пĕлтерчĕç, ял старостине С. Колбасова пуçарулăх ушкăнне ертсе пыма шанчĕç. Смета хакĕ 1 млн та 200 пин тенкĕ.

Вырăнти çынсене конкурс суйлавĕнчи çĕнĕлĕхсене ăнлантарнă, патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерекен пĕрлехи порталта сасăламалли пирки пĕлтернĕ.


Кашни сĕнÿ вырăнлă.

# Ярославкăсем шыв башни улăштарасшăн, пăрăхсем çĕнетесшĕн


Пĕрле сÿтсе явмалли нумай.


Ярославкăра кивĕ башня вырăнне çĕннине вырнаçтарĕç.

***Октябрĕн 26-мĕшĕнче Муркаш муниципалитет округĕн Ярославка территори пайĕн ертÿçи Регина Флангова тата территори пайĕн эксперт специалисчĕ Ольга Сютейкина Ярославка, Çĕн Чемей ялĕсенче пурăнакан çынсемпе тĕл пулусем ирттерчĕç. Ответлă ĕçченсем унта вĕсемпе йăлари актуаллă ыйтусене сÿтсе яврĕç. Хальхи вăхăтра Ярославка, Çĕн Чемей ялĕсенче пурăнакансене шывпа тивĕçтерес ыйту пăшăрхантарать.***

Ярославка ялĕн çыннисене япăхса çитнĕ кивĕ башня шывпа тивĕçтерет. Ăна тăтăшах юсама тивнĕрен кивĕ башньăна çĕннипе улăштарма вăхăт. Çавăн пекех Ярославка ялĕнчи Парковая, Новая, Яргейкино урамсене тивĕçтерекен шыв çыхăнăвĕн сетьне модернизацилемелле. Çĕн Чемей ялĕнчи ыйту та çивĕч, унта шыв пăрăхĕсене улăштармалла. Кивĕскерсене çулсерен юсама тивет. Çынсем шывпа тивĕçтерессин лайăхланасса кĕтеççĕ.

Ярославка тата Çĕн Чемей ялĕсенче пурăнакан çынсем тĕл пулусене активлă хутшăнчĕç. Ыйтусене пĕрле сÿтсе явнă май вĕсем пуçарулăх бюджечĕн программине хутшăнма шухăшларĕç.

Пуçарулăх бюджечĕн проекчĕсем çаксем пулмалла.

Ярославка ялĕнчи шыв башнипе артезиан скважинине улăштарасси, проект хакĕ – 2 миллион та 604 пин тенкĕ ытла, Ярославка ялĕнчи Парковая урамри шыв çыхăнăвне юсасси, проект хакĕ – 1 миллион ытла тенкĕ, Ярославка ялĕнчи Новая, Яргейкино урамсенчи тата Çĕн Чемейре шыв пăрăхĕсене улăштарасси, проект хакĕ – 8 миллион тенкĕ ытла.

Çак ялсенче пурăнакан çынсене пуçарулăх бюджечĕн проекчĕсене пурнăçлассинчи çĕнĕлĕхсем пирки ăнлантарнă. Чи малтанах пуçарулăх проекчĕсен конкурсĕ цифра мелĕпе пулассине палăртмалла. Çавна май кăçалтан тытăнса заявкăсене конкурса «Чувашия.Онлайн» система урлă кĕртеççĕ.

Ялта пурăнакансене ытларах пулăшас тесе малашне проектсемшĕн патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерекен пĕрлехи порталăн «Госуслуги» системинче сасăламалла пулать. Çынсене территори пайĕн администрацийĕ çак ĕçе активлă хутшăнма ыйтать.

2025 çул кусăм çулĕ шутланать, проектсемшĕн сасăлава активлă хутшăннишĕн конкурсра хушма балл параççĕ. Ноябрĕн 2 – 10-мĕшĕсенче вырăнсенче пуçарулăх проекчĕсемшĕн сасăламалла.

**Проект Чăваш Ен Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**